27-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1945 ЯНВАРЬ 7 ВЫРСАРНИКУН 4(6755) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

Наукăпа çутěç пропаганди— идеологи ěçěн пысăк участокě

Пирěн парти ěççыннисем хушшинче наука пěлěвне сарас ěçе ялан пысăк вырăна хурать. Большевиксен партийě малта тăракан наукăн, марксистла-ленинла наукăн ялавне çÿлте тытса пырать.

Совет влаçěн çулěсенче пирěн çěршывра чăннипех те культурăллă революци пулса иртрě. Большевиксен партийěпе совет правительстви халăха наука пěлěвěсемпе хěçпăшаллантарас тěлěшпе калама çук пысăк ěçсем туса ирттерчěç. Пирěн çěршывра хут пěлменнине пěтерес, пурне те хут вěрентес ěçсене пурнăçа кěртнě. Çěршывра аслă тата вăтам шкулсем нумай уçнă. Совет влаçěн çулěсенче совет интеллигенцин çěнě кадрěсем—халăх интересěсене пурнăçа кěртсе пыракан кадрсем ÿссе çитěнчěç.

Апла пулин те наукăпа çутěç пропагандине халăх хушшинче сарса пырасси, çутçанталăкпа этем обществи çинчен калакан наука пěлěвěсене массăсем хушшинче сарасси халě те парти организацийěсен ответлă задачи пулса тăрать. ВКП(б) Центральный Комитечě 1944 çулхи сентябрěн 27-мěшěнче йышăннă постановленире наука пěлěвне ěççыннисем хушшине сарас ěç хальхи условисенче ěççыннисен аслă сийěсен культурине çěклес тата тěшмěшлěх юлашкийěсене пěтерес тěлěшпе питех те кирлě пулса тăнине кăтартса панă. Кивě пурнăçран юлнă йăласем халě те пур-ха. Вěсем хăйсем тěллěнех пěтме пултараймаççě. Çавăнпа та халăх хушшинче политикăллă воспитани ěçне тата культурăпа çутěç пропагандине пěрмаях активлăн организацилесе пымалла.

ВКП(б) Центральный Комитечě юлашки вăхăтра парти организацийěсемпе çутěç органěсем халăх хушшинче наукăпа çутěç пропагандине сарас ěçе сÿрěклетнине палăртнă. Çакă вăл пирěн Чăваш республикине те пěтěмěшпех тивет. Çапла, сăмахран, иртнě çулта Чăваш АССР Çутěç Халăх Комиссариачě çумěнчи лекци бюровě Шупашкар хулинче ирттернě 120 лекцирен 12-шě кăна наука ыйтăвěсемпе пулнă. Уйрăмăнах наукăпа çутěç пропагандине сарасси ялта пурăнакан халăх хушшинче çителěксěр пулса пырать. ВКП(б) Центральный Комитечě постановлени йышăнниччен ялти халăх хушшинче наукăпа çутěç пропагандине чылай районсенче пачах та организацилемен. Наукăпа çутěç ыйтăвěсемпе лекцисем ирттерес ěçе учительсене, врачсене, агрономсене, зоотехниксене явăçтарман.

Асăннă çитменлěхсем пěтěмпех ВКП(б) райкомěсемпе хула комитечěсем тата вěсен пропагандăпа агитаци пайěсем наукăпа çутěç пропагандине сарса пырас ěçсем çине çителěксěр çаврăнса пăхнă пирки, пропаганда ěçěн çав кирлě участокне ертсе пырас ěçе сÿрěклетнě пирки пулнă.

ВКП(б) Центральный Комитечě йышăннă постановлени çавăн пек çитменлěхе тěпě-йěрěпех пěтерме тата парти организацисем наукăпа çутěç пропагандине туса пырас ěçе вăйлатма хушрě. ВКП(б) Центральный Комитечěн постановленине тата ВКП(б) Обкомěн XX-мěш пленумě «Чăваш парторганизацинче массăллă-политикăллă ěçпе идеологи ěçě мěнле пулса пыни тата ăна лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă решение пурнăçа кěртсе пырса, çутěç пайěсем çумěнче наука ыйтăвěсемпе лекцисем ирттерме лекторсен ушкăнěсене тунă. Унта учительсем, врачсем, агрономсем тата ытти специалистсем тăраççě. Ишлей районěнчи çутěç пайě çумěнчи лекторсен ушкăнěнче 19 çын тăрать, вěсенчен 16-шě аслă шкулсенчен вěренсе тухнăскерсем. Элěк районěнчи лекторсен ушкăнěнче 24 çын тăрать. Çав лекторсен вăйěпе юлашки вăхăтра колхозсемпе вулав çурчěсенче наука ыйтăвěсем тăрăх 20 лекци ытла ирттернě. ВКП(б) райкомěн пропагандăпа агитаци пайě тата çутěç пайě кашни ялтах уйăхра пěр хутран кая мар лекцисем ирттереççě.

Çав вăхăтрах наука пěлěвěсене халăх хушшинче сарас ěçре пысăк çитменлěхсем палăраççě-ха. Çěрпÿ районěнче наука ыйтăвěсемпе лекцисем тума çынсем суйласа илмен, районри çутěç пайě халăх валли лекцисем ирттерме васкамасть. ВКП(б) райкомě те наукăпа çутěç пропаганди çинчен ячěшěн кăна сÿтсе-явнă, çутěç органěсене çав ěçе вăйлатма пулăшмасть. Шăмăршă, Çěмěрле, Вăрнар тата Калинино районěсенчи çутěç пайěсем çумěнчи лекторсен ушкăнěсенче те 3—6 çын çеç тăраççě. Вěсем, паллах, халăх ыйтăвне ăнăçлăн тивěçтерме пултараймаççě.

Тепěр пысăк çитменлěх вăл—лекцисен пахалăхě мěнле пулнине начар тěрěслесе пыни пулать. Чăваш АССР Çутěç Халăх Комиссариачě çумěнчи лекци бюровěнче ку тарана çитсе те методика комиссине туман. Лекцисем вуланă чухне нагляднăй пособисемпе çителěксěр усă кураççě. Библиотекăсемпе вулав çурчěсенче наука кěнекисем сахал. Анчах та Чăвашсен государство издательстви наука кěнекисемпе брошюрăсене чăвашла пичетлесе кăларас, сине организацилемен. Наука ыйтăвěсемпе радиопередачăсем те сахал пулаççě.

Чăваш АССР Çутěç Халăх Комиссариачě тата унăн лекци бюровě наукăпа çутěç пропагандине çителěксěр организацилесе пырать. Чăваш АССР Çутěç Халăх Комиссариачě наукăпа çутěç пропагандине туса пырас тěлěшпе 1944 çулхи ноябрьпе декабрь уйăхěсенче пурнăçа кěртме палăртнă ěçсенчен сахалăшне кăна пурнăçланă.

Наукăпа çутěç пропагандине сарас ěç çине çавăн пек пăхнипе килěшме çук. Вăл ěçе кулленех тимлěн организацилесе пымалла. ВКП(б) райкомěсемпе хула комитечěсен, пропагандăпа агитаци пайěсен наукăпа çутěç пропагандине вăйлатас тата унăн пахалăхне лайăхлатас тěлěшпе куллен тимлěн ěçлемелле.

Наукăпа çутěç пропагандин тěп тěллевě—çутçанталăкăн явленийěсене, наукăпа техника тата культура çитěнěвěсене ăнлантарса парасси пулать. Пурнăç мěнле пуçланса кайни, хěвелпе çěр мěнле пулни, этем мěнле тата ăçтан пулса кайни, çынсемпе ÿсентăрансен тата выльăх-чěрлěхсен пурнăçěсем, чир-чěрсем мěнрен пуçланни тата вěсемпе кěрешесси, агрономи никěсěсем тата ытти нумай ыйтусемпе халăх хушшинче, уйрăмах ялсенче, кěнекесем, хаçатсем вуласа парассине тата лекцисем ирттерессине организацилемелле. Наукăпа çутěç пропагандине ěççыннисен кулленхи ěçěпе тата пурнăçěпе таччăн çыхăнтарса пымалла.

Идеологи ěçěнче пур ěçсем те пěр пекех кирлě. Çав ěçсенчен пěрне те пулин ялăхтарни пысăк сиен кÿме пултарать. Çавăнпа та парти организацийěсен наукăпа çутěç пропагандине кулленех тимлěн ертсе пымалла. Наукăпа çутěç пропаганди—пирěн ěççыннисене коммунистла воспитани парас тěлěшпе тумалли пěтěм ěçсен уйрăлми пайě пулса тăрать.

Совет Союзě тăрăх

Ÿкерчěк çинче: Мускаври Сталин ячěпе тăракан автозаводри стахановка наладчица А. Ф. Широватова (сылтăмри) Т. А. Горюшева шлифовщицăн продукцине тěрěслет.
В. ЗУНИН фотоÿкерчěкě.

ГРИБОЕДОВ КУНĚСЕМ МУСКАВ УНИВЕРСИТЕТĚНЧЕ

Мускаври Ломоносов ячěпе тăракан государство университечě А. С. Грибоедов çуралнăранпа 150 çул тултарнине уявлама хатěрленет.

Филологи факультетěнче вырăс чěлхи отделенийěн студенчěсемпе аспиранчěсем валли аслă писателěн творчествипе паллашма уйрăм лекцисем пулса иртеççě. Грибоедов кунěсенче столицăри предприятисенче тата шефа илнě колхозсенче студентсемпе аспирантсем Грибоедов пурнăçěпе творчестви çинчен докладсем туса параççě. Январь уйăхěн вěçěнче, генилле писателěн юбилейě вăхăтěнче, факультет научнăй конференци ирттерет. (ТАСС).

А. С. ПОПОВ ТУНА ПРИБОРСЕМ

Ленинградра, Тинěс-Çар Флочěн тěп музейěн фрончěсенче, радио шухăшласа каларакан А. С. Поповăн пурнăçěпе çыхăнса тăракан 100 экспоната яхăн шутлацать. Вěсем хушшинче Кронштадтри электромина шкулěнчи лабораторире ěçленě вăхăтра шухăшласа кăларнă япаласем—Поповăн пирвайхи приемнăй станцийě, карап çинчи радиоустановка пур.

Радио шухăшласа кăларакан Поповăн ячěпе çыхăнса тăракан экспонатсене пурне те музейре вырнаçтараççě. (ТАСС).

КИРГИЗСЕН КЛАССИКЛА ПĚРРЕМĚШ БАЛЕЧĚ

Киргизсен оперăпа балетăн Ленин орденлă государство театрě «Чолпон» ятлă çěнě балет лартнă. Вăл ěнтě Киргизсен классикла пěрремěш балечě пулса тăрать. Музыкине искусствăн тава тивěçлě деятелě Раухвергер композитор çырнă. Хăйěн ěçěнче вăл киргизсен музыка фольклорěне ăнлăн усă курнă. Либретто авторěсем—паллă писатель-драмматург Отунчу Сарбагишев тата театрăн главнăй балетмейстерě, спектакльсем лартаканě Крамаровский. Либереттине илемлě сунарçă Чолпон çинчен халăх хывнă сăмах тăрăх çырнă. (ТАСС).

Харпăрхăй перекетлесе хăварнă тырра— Хěрлě Çар фондне

ЭЛĚК, январěн 6-мěшě. (Телефонпа). Районри колхозниксемпе колхозницăсем паянхи кун тěлне Хěрлě Çар фондне 6720 пăт тырă леçсе панă. «Шуçăм» колхозра 12 хуçалăх хăйсем перекетленě тырăран 70 пăт панă. «Первое мая» колхоз 120 пăт, «Доброволец» колхоз членěсем 210 пăт, «Большевик» колхоз членěсем 180 пăт хатěрлев пунктне леçсе панă. «Труд» колхоз председателě Быков юлташ 10 пăт тырă Хěрлě Çар фондне панă.

Хěрлě Çар фондне тырă парасси районра халě те пысăк çěкленÿпе пырать.

М. ФЕДОТОВ,
ВКП(б) райкомěн секретарě.

* * *

Шупашкар районěнчи колхозниксем Хěрлě Çар фондне 20.110 пăт тырă панă. Вăл шутран 5.000 пăтне колхозниксем хăйсем перекетлесе хăварнă тырăран панă. Çак тырра пěтěмпех январěн 5-мěшě тěлне хатěрлев пунктне леçсе пěтернě.

Районра Хěрлě Çар фондне тырă парассипе уйрăмăнах Молотов ячěпе тăракан колхозра (председателě Петров) пысăк çěкленÿпе иртнě. Çак колхоз членěсем хăйсем перекетленě тырăран тата колхоз фондěнчен 1500 пăт панă. «Первое мая» колхоз 300 пăт, колхоз председателě Ефремов юлташ 12 пăт панă.

* * *

ВАРНАР, январěн 6-мěшě. (Телефонпа). Паянхи кун тěлне районри колхозсем Хěрлě Çар фондне 6000 пăт тырă хатěрлев пунктне леçнě. Кольцовкари Ленин орденлă Сталин ячěпе тăракан колхоз членěсем 930 пăт, «Первое мая» колхоз членěсем 510 пăт, Киров ячěпе тăракан колхоз членěсем 340 пăт, «Гигант» колхоз членěсем 540 пăт, «Самолет» колхоз членěсем 510 пăт панă.

Вырăнти удобренисем хатěрлемелли уйăхлăх

Тислěке вăкăрсемпе турттараççě

ОКТЯБРЬСКОЕ, январěн 6-мěшě. (Телефонпа). Опнерти «Молния» колхозра (председателě Ф. Иванов юлташ) уйăхлăха лайăх пуçăннă. Колхоз пилěк кунлăх задание ытлашшипех тултарнă. Колхозри çамрăксем А. Тихонова, В. Болотов, М. Кольцов юлташсем тислěк кăлармалли нормăна темиçе хут ирттерсе тултараççě. Кашни кунах вěсем 7-шер ěçкунě туса пынă. Тислěке колхозри фермăсенчен кăна мар, колхозниксен килкартисенчен те кăлараççě. Уйăхлăх пуçланнăранпа кунта 13 центнер кěл, 16 центнер кайăк-кěшěк тислěкě пухнă.

«Новая жизнь» колхозра та çуракине лайăх хатěрленеççě. Вăрлăхлăх тулă акма 10 гектар уйăрнă. Çак участока акмалли тырра пěтěмпех алăпа суйласа тасатнă. Кунта тислěке уя 4 вăкăрпа, «Аниш» колхозра 8 вăкăрпа, «Заря» колхозра 6 вăкăрпа турттараççě.

Вырăнти удобренисем хатěрлес тата тислěке уя кăларас ěç ытти колхозсенче те ăнăçлăн пырать.

С. РУМЯНЦЕВ.

Колхоз çамрăкěсен йěлтěрлě ăмăртăвě мěнле пырать
(Республикăри радиопереличкăран)

Колхоз çамрăкěсен йěлтěрлě ăмăртăвě колхозсенче епле иртсе пынине палăртас майпа январěн 6-мěшěнче республикăри радиопереличка пулса иртрě.

Малтанхи сăмаха ВЛКСМ Муркаш райкомěн секретарьне Артемьева юлташа пачěç. Районра колхоз çамрăкěсен ăмăртăвне иртсе пыма 7 çынран оргкомитет суйланă. Оргкомитет членěсене уйрăм участоксем çумне çирěплетнě. Халăха йěлтěрпе çÿреме вěрентес тěлěшпе районра 275 команда организациленě. Вěсене валли 475 мăшăр йěлтěр хатěрленě. Вăл шутран 100 мăшăрне çамрăксем хăйсен килěсенче тунă. Паянхи куна 45 колхозра колхоз çамрăкěсен ăмăртăвне ирттернě. Унта пурě 1.925 çын (75 команда) хутшăннă. Вěсенчен уйрăмах «Тиуши», «Свобода» колхозсенчи командăсем лайăх результатсем кăтартнă.

Колхоз çамрăкěсен Пěтěм Союзри йěлтěрлě ăмăртăвне хатěрленě май, районра кăçал йěлтěр спорчě анлăн саралнă. Çак кунсенче «Свобода», «Авангард», «Восток», «Красное Сормово» тата ытти пысăк колхозсенче, пурě 15 колхозра, çěнěрен физкультура коллективěсем тунă. Январěн 10-мěшěччен районри пур колхозсенче те йěлтěрлě ăмăртусем пулса иртěç. Колхозсенчи ăмăртура мала тухнă командăсем районри ăмăртăва хутшăнма хатěрленеççě.

Кун хыççăн ВЛКСМ Красноармейски райкомěн секретарě Скворцов юлташ сăмах илет. Районри 88 колхозран 75-ěшěнче йěлтěрлě ăмăрту ирттернě. Вěсене 1.308 çын, вăл шутран колхозниксем 204 çын, хутшăннă. Йěлтěрçě-боецсем хатěрлес тěлěшпе 20 сехетлě программа тăрăх 550 çын, 30 сехетлě программа тăрăх 190 çын вěрентсе кăларнă.

Спорт ěçне малалла сарса пырас тесен, чи малтан, колхозсенчи физкультура коллективěсене çирěплетмелле, çěнě коллективсем тумалла. Анчах ку районри физкультурăпа спорт комитечěн председателě Яганов, ВЛКСМ райкомěн секретарě Скворцов юлташсем, çавăн пекех ВКП(б) райкомěн çарěç отделěн заведующийě те çак ěçпе пачах интересленмеççě. Вěсем районри колхозсенче физкультура коллективěсем мěн чухлě пуррине те пěлмеççě.

ВЛКСМ Етěрне райкомěн секретарě Бурашников юлташ колхоз çамрăкěсен йěлтěрлě ăмăртăвě районра активлăн иртсе пыни çинчен пěлтерет. Халиччен 35 колхозра ăмăрту ирттернě.

Малалла ВЛКСМ Çěрпÿ райкомěн секретарьне Федоров юлташа сăмах параççě. Вăл колхозсенчи ăмăртăва лайăх хатěрленсе ирттернě физкультура коллективěсем, лайăх йěлтěрçěсем çинчен каласа пачě.

ВКП(б) Пăрачкав райкомěн çарěç отделěн заведующийě Бубукин юлташ хăйсен районěнче массăллă спорт ěçě мěнле пулса пыни çинчен каласа пачě. Кунта колхоз çамрăкěсен ăмăртăвě вăрахан пулса пырать. Паянхи куна пурě те 6 колхозра çеç ăмăрту ирттернě.

Радиопереличка вěçленес умěн ВКП(б) Чăваш Обкомěн секретарě Андреев тата ВЛКСМ Чăваш Обкомěн çарěç енěпе ěçлекен секретарě Петрухин юлташсем сăмах тухса калаççě. Вěсем çак ěçре юлса пыракан районсене критиклерěç. Çитменлěхсене пěтерсе, колхоз çамрăкěсен йěлтěрлě ăмăртăвне ăнăçлăн ирттерессишěн тăрăшса ěçлеме чěнчěç.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Ÿкерчěк çинче: Сěнтěрвăрри районěнчи Шуркасси промкомбинатěнчи столяр-стахановец Г. Михайлов. Вăл хăйěн нормине яланах нумай ирттерсе тултарать.
С. ФРИД фотоÿкерчěкě.

Стахановецсене „Отличный вагонник" значокпа наградăланă

СССР Çулěçр Халăх Комиссариачěн вагонсем юсакан заводсен Управленийěн приказě тăрăх, Канашри вагонсем юсакан заводри работниксене: Г. А. Ивонин, С. Д. Шитобоков, М. Н. Никулин, В. И. Овчинников, К. И. Игнатьев, Н. Г. Лаврентьев, Я. Л. Ознобихин, И. Я. Шапиро, А. Я. Кузин, М. И. Чуракова юлташсене «Отличный вагонник» значокпа наградăланă. Вагонсем юсакан коллона начальникне Л. П. Дорошенко юлташа, унăн заместительне Н. М. Горбунов юлташа уйăхри ěç укçипе премиленě. Завод начальникне Поздняков юлташа лайăх стахановецсене премилеме 4.000 тенкě укçа расходлама ирěк панă.

Учительсен художествăллă пултарулăх кружокěсем

Учительсен профсоюзěн Ишлей райкомě тăрăшнипе район центрě сывăхěнчи шкулсенчи учительсен хор тата драма кружокне организациленě. Хор кружокěнче 86 учитель, драма кружокěнче 45 учитель тăрать. Вăл кружоксем хěллехи каникулсем вăхăтěнче учительсем тата колхозниксем валли концертсем параççě.

Сунарçăсем тискер кайăксене тытаççě

Первомайски районра тискер кайăксене тытас ěçе аван йěркеленě. Ишлей ялěнчи сунарçă Н. Дубинин хěле кěнěренпе 27 пакша тата пăсара тытнă. Сителри сунарçă Д. Соколов 2 кашкăр тата ытти кайăксем те нумай тытнă.

70 çул хушши тимěрçěре

КУСЛАВККА. Н. Мочалов 15 çулта чухнех Пăрмасри тимěрçě лаççинче ěçлеме тытăннă. Халě Мочалов юлташ 85 çулта. Вăл лайăх сывлăхлă, яланах лаçра ěçлет.

Мочалов юлташăн икě ывăлě Хěрлě Çар ретěнче. Пěри, Василий Николаевич—полковник.

Совет Союзě Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине йышăнни тата дипломатилле çыхăну пуçласа яни çинчен

Январěн 4-мěшěнче Совет правительстви Польша республикин Вăхăтлăх Правительствинчен официальнăй пěлтерÿ илнě. Çав пěлтерÿре, Польша Халăх Совечěн йышăнăвě тăрăх, Польша Халăхěн Ирěклěх Комитетěнчен Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине туса хуни çинчен каланă. Çавăнпа пěрлех Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви Совет правительствипе дипломатилле çыхăну пуçласа ярса, пěр-пěрин патне посолсем яма сěннě.

СССР Верховный Совет Президиумě, демократилле Польшăпа туслă пурăнас политикăна вăйлатса пырассине асра тытса, Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине йышăннă тата пěр-пěрич патне посолсем ямалла тунă.

СССР Верховный Совет Президиумě Виктор Захарович Лебедев юлташа Совет Союзěн Польшăри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолě пулма уйăрса лартнă. (ТАСС).

Совет Союзěн Геройě Н. Марков юлташ тăван ялěнче

ОКТЯБРЬСКОЕ, январěн 6-мěшě. (Телефонпа). Пирěн земляк, Совет Союзěн Геройě Н. Марков юлташ хăй çуралнă Кутемер ялне курма таврăннă. Кутемерти «Коммунизм» колхозра хăйсен землякě таврăннă ятпа пуху пулса иртнě.

Совет Союзěн Геройě Н. Марков юлташ колхозниксемпе колхозницăсене Хěрлě Çар боецěсен фронтри паттăр ěçěсем çинчен каласа панă. Колхозниксемпе колхозницăсем Совет Союз Геройěн Марков юлташăн сăмахне ăшă кăмăлпа итленě.

Марков юлташ хыççăн колхозниксемпе колхозницăсем хěрÿллě сăмахсем туха-туха каланă. Вěсем пурте, Хěрлě Çар фондне ытларах тырă парса, Хěрлě Çара çěнтерÿ тума пулăшасси çинчен каланă.

Паттăр землякăн Марков юлташăн кăкăрě çинче Ленин орденě, Ылтăн Çăлтăр тата Хěрлě Çăлтăр орденě йăлкăшса тăраççě.

Ялта пěр кун пурăннă хыççăн Н. Марков юлташ хăйěн чаçне тухса карě.

Совет Союзěн Геройě Б. М. Васильев Шупашкарта

Пирěн земляк, Совет Союзěн Геройě подполковник Б. М. Васильев юлташ, Етěрне районěнчи Нагорное ялěнче хăйěн çемьинче пулнă хыççăн, ěнер Шупашкара килчě. Шупашкарта вăл ВКП(б) Обкомěнче тата Чăваш АССР Верховный Советěнче пулса калаçрě.

Çакăн хыççăн ěнерех Васильев юлташ фронта хăйěн чаçне тухса кайрě.

Совет Информаци Бюровěнчен

ЯНВАРĚН 5-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январěн 5-мěшěнче БУДАПЕШТ районěнче пирěн çарсем тăшманăн хупăрласа илнě группировкине пěтерсе тăкассишěн çапăçнă, 235 квартал туртса илнě.

Январěн 4-мěшěнче пулса иртнě урамри çапăçусенче пирěн çарсем нимěçсемпе венгерсен 2.400 салтакěпе офицерне тыткăна илнě.

БУДАПЕШТРАН çурçěр-хěвеланăçнерехре пирěн çарсем тăшманăн БУДАПЕШТ патнелле татса кěме хăтланнă пехотипе танкěсен вăйлă атакисене ăнăçлăн сире-сире янă. Январěн 1-мěшěнче пулса иртнě çапăçусенче пирěн çарсем ку районра нимěçсен 51 танкне çěмěрсе тăкнă. БУДАПЕШТРАН çурçěр-хěвеланăçнерехри районра сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ÿкернě.

Фронтăн ытти участокěсенче разведчиксем шыраса çÿренě тата чылай пунктсенче тěллěн-тěллěн çапăçнă.

☆ ☆ ☆

Будапешт районěнче пирěн çарсем нимěç çарěсен хупăрласа илнě группировкине пěтерсе тăкассишěн çапăçнă. Совет чаçěсем, тăшман хирěç тăнине çěнтере-çěнтере, квартал хыççăн квартал гитлеровецсенчен тасатаççě. Тыткăна лекнисем каласа кăтартнă тăрăх, нимěçсен командованийě ятарласа уйрăм приказ кăларнă. Приказра çапла каланă: салтаксенчен кам та пулин хăйсен позицийěсене хăй ирěкěпе пăрахса кайсан е тыткăна парăнсан, унăн çемйине пěтěмěшпех персе пăрахаççě, тенě.

Паян ипподром районěнче вăйлă çапăçусем пулса иртнě. Пирěн отрядсем çěрле ипподрома вăркăнса кěрсе кайнă. Ку ипподромран нимěçсем хăйсен транспорт самолечěсене анса лармалли вырăн тунă. Тăшман çав ипподрома каялла туртса илме хăтланса темиçе хутчен те вăйлă контратакăсем тунă. Анчах та нимěçсен контратакисене пурне те сирсе янă. Çапăçу хирěнче тăшманăн 300 вилли ытла выртса юлнă тата çунса кайнă 4 танк тăрса юлнă. Тепěр участокра пирěн гварди подразделенийěсем гитлеровецсене атакăланă та темиçе кварталтан хăваласа кăларнă. Гвардеецсем 8 тупă, 26 пулемет, 5 миномет, танксене пемелли 11 пăшал тата боеприпас нумай тытса илнě. 260 гитлеровеца тыткăна илнě. Садков лейтенант взвочě малалла куçса пынă чухне, ăна хирěç тăшман вăйлăн тăма пуçланă. Нимěçсем пěр çуртра тупăпа пулеметсем лартнă та пирěн боецсене малалла кайма паман. Садков юлташ, çуртсен хушшисемпе пырса, тăшман туппи патне пырса тухнă та гитлеровецсене кěтмен çěртен хыçалтан тапăннă. Вăл, автоматпа персе, нимěç артиллеристěсене пěтерсе тăкнă. Взвод боецěсем çав çурта хăвăрт вăркăнса кěрсе кайнă та вуншар гитлеровеца пěтерсе тăкнă. Тепěр кварталта Митява офицер, танксене пемелли пăшалпа персе, нимěçсен танкне çунтарса янă, çапла вăл совет пехотине малалла кайма çул уçса панă.

* * *

Будапештран çурçěр-хěвеланăçнерехре нимěçсем танксемпе пехота вăйěсемпе хăйсен Будапешт хулинчи çарěсем патне татса кěме хăтланнă. Тăшманăн 25—30-шар танкран тăракан ушкăнěсем темиçе хутчен те атакăна кěре-кěре кайнă. Пěр участокра ěç тухман хыççăн нимěçсем тепěр районра атака пуçласа янă, вěсем совет оборонинче вăйсăр вырăн тупма тăрăшаççě. Атакăсенче пěтěмпе тăшманăн 300 танкне çити пулнă. Пирěн пехотинецсем, артиллеристсем тата танкистсем тăшман атакисене ăнăçлăн сирсе янă. Тăшманăн совет чаçěсем тăракан вырăна кěрсе кайнă уйрăм ушкăнěсене çавăрса илсе пěтерсе тăкнă. Малтанлăха палăртнă тăрăх, кун каçиччен 3.000 гитлеровеца ытла пěтерсе тăкнă. Нимěçсен 514 салтакěпе офицерне тыткăна илнě. Тыткăна лекнисем хушшинче эсэсовецсен «Викинг» ятлă танковăй дивизийěн тата «Вилě пуç» ятлă танковăй дивизийěн салтакěсем пур. Ку дивизисене фронтăн çак участокне юлашки вăхăтра куçарса килнě.

Пирěн авиаци, çěр çинчи çарсене пулăшса тăрса, бомбăсем пăрахса штурмласа, тăшманăн çыннисемпе техникине пěтерсе пынă. Темиçе танк тата пехотăпа çар хатěрěсем тиесе пынă 120 автомашинăна çěмěрсе тăкнă, артиллерипе минометсен 10 батарейине пусарса лартнă, çавăн пекех тата тăшман çарěсем тăракан вырăнта нумай çěрте пушарсем кăларнă.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен кăнтăр-хěвеланăçнерехре пирěн разведка ушкăнěсем çапăçнă. Совет боецěсем çěрле тăшман тăракан вырăна кěрсе кайнă та темиçе вунă гитлеровеца вěлернě, 9 нимěçе тыткăна илнě. Тепěр участокра нимěçсен пěр роти совет позицийěсем патне çывхарма хăтланнă, анчах та пирěн боевой охраненири красноармеецсем, пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, нимěçсене сапаласа янă. Пирěн позицисен малти хěррине пымалли вырăнсенче тăшманăн 26 вилли выртса юлнă.

* * *

Нимěçсен «Дирлевангер» ятлă бригадинчен Хěрлě Çар енне тарса каçнă салтак Вилли Вегнер çапла каласа кăтартнă: «Çулла эпě Саксенгаузенри концентрацилле лагерьте тăтăм. унта мана айăплă пулнăшăн хупса лартрěç. Вăл вăхăтра çав лагерьте темиçе вунă пин çын ларатчě. Вěсенчен 6 пин çын нимěçсем пулнă, ыттисем—вырăссем французсем, акăлчансем, поляксем, чехсем, югославсем тата ыттисем те. Эсэсовецсем кунсеренех çавăнта ларакан çынсене темиçе çěршер çынна пěтерсе тăратчěç. Анчах та лагерьте яланах туп-тулли халăхчě. мěншěн тесен унта пěр чарăнмасăр çынсене хăваласа килетчěç».

Эсэсовецсен «Полицай» ятлă 4-мěш дивизийěнчен Хěрлě Çар енне тарса каçнă салтак—француз Шарль Руже, айăпа пулнипе Дахау лагерěнче ларса курнăскер, çапла каласа кăтартнă: «Эпě Дахау лагерěнче пěр çул ытла лартăм. 1944 çулхи июлěн 15-мěшě умěн лагерьте 40 пин çын ытла ларатчěç. Вěсен хушшинче Европăри кашни халăх çыннисем курма пулатчě. Хыр вăрманěнче крематори пурччě. Çав крематорие лагерьте персе пăрахнă е çакса вěлернě çынсен ÿчěсене çунтаратчěç. Июль уйăхěн вěçěнче лагерьте тата тепěр крематори тума пуçларěç». Юлашкинчен Шарль Руже çапла каланă: «Нимěçсен лагерěсенче пулса курнă çын ăна пěтěм ěмěрěпех астуса пурăнать. Халě Германи—ирěклěхе юратакан мěнпур халăхсен тěрми пулса тăрать. Эпě нимěç ирсěрěсене вěсем Европăри мěнпур халăхсене тата манăн тăван çěршыва кÿнě пур усал ěçсемшěн те пěтерсе тăкса таварасшăн».

Радио — чăваш ěççыннисем хушшинче

Партипе правительство пирěн çěршывра радио ěçне аталантарассине яланах пысăк вырăна хунă. Мěншěн тесен, радио пропагандăпа агитаци ěçěнче, ěççыннисене воспитани парас ěçре пысăк вăй пулса тăрать. Владимир Ильич Ленин радиона «хутсăр хаçат», «çухрăма пěлмен хаçат» тесе каланă. Халě пирěн пěтěм çěршыв тата çěнтерÿллě Хěрлě Çар радио тăрăх çěнě хыпарсене итлеме пултарать.

Чăваш ěççыннисен пурнăçěнче те радио пысăк вырăн йышăнса тăрать. Радио пирěн халăха çутта кăларас, культурăллă воспитани парас енěпе пысăк ěçсем турě. Совет влаçěн малтанхи çулěсенчех, колхозсене йěркелесе янă вăхăтра, радио пирěн халăх хушшине большевикла тěрěслěхе Ленинла Сталин идейисене сарса пычě, халăха социализм çуртне тума чěнчě.

Чăваш столици — Шупашкар хули, чи малтанах, 1926 çулта радиопа каласма тытăннă. Çав çулта унта радиоузел тунă, ăна халě Пăрлă океан çинчи пěр радиостанци начальникě пулса ěçлекен С. Я. Коншин юлташ ертсе пынă. Халě чăвашсен радиостанцийěн пуçлăхě пулса тăракан С. А Андреев юлташ та çав радиоузелта тимлěн ěçленě.

Шупашкар çыннисем радиоузел ěçлеме тытăннине çав тери хапăл туса йышăннă. Вěсем ушкăнě-ушкăнěпе радиоузела çÿренě. Радиоузел урлă Мускава итленě, Шупашкартан концертсем, спектакльсем панă. 1926 çулта радио тăрăх хаçат-журналсенчи статьясене вуласа пама тытăннă. Çав вăхăтсенчех Канашра, Улатăрта тата Çěмěрлере те радиоузелсем ěçлеме тытăннă. 1931 çулта вара радио ěçě массăллăн сарăлса пыма пуçланă. Çак ěçре халě Чăвашрадиокомитечěн техникě пулса ěçлекен Н. В. Красильников юлташ нумай ěçленě.

1931 çулта Шупашкарта пěр киловат вăйлě радиостанци туса лартнă. 1932 çулта, Чăваш республикин правительстви йышăннă тăрăх, радиовещани йěркелесе каять. Çакăн хыççăн вара пирěн республикăра радио ěçě пěрмаях малалла аталанса пырать. 1936 — 1937 çулсенче радио фестивальсем пулса иртнě. Вěсем чăваш халăхěн культурăллă вăйне лайăх кăтартса панă. Микрофон умěнче чăваш халăхěн чи лайăх представителěсем тухса каланă. Вěсем социализмлă строительство çитěнěвěсем çинчен каласа панă.

Хальхи вăхăтра республикăра пурě 20.495 радиоточка ěçлет. Унсăр пуçне 550 ял Совечěпе колхоз телефон проводěсем тăрăх радио итлеççě.

Радион пархатарлă ěçě вăрçă вăхăтěнче уйрăмах лайăх палăрчě. Вăл фронтпа тыла пěтěçтерме, халăха пěрмаях çěнě хыпарсене пěлтерсе тăма пулăшрě. Микрофон умěнче час-часах геройсем, писательсем, артистсем, колхозниксем, рабочисем инженерсем туха-туха калаççě.

Пирěн передачăсенче пропагандăпа агитаци секторě пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак сектор Сталин юлташăн доклачěсемпе приказěсене вěренме пулăшас енěпе, наукăпа техника хыпарěсене, промышленноçри çěнě ěç меслечěсене сарас тěлěшпе тата партипе правительство решенийěсене халăх патне çитерес енěпе нумай ěçсем тăвать. «Юлашки хыпарсен» кăларăмě радио итлекенсене хуласемпе ялсенчи çěнě хыпарсемпе паллаштарать. Литературăпа музыка передачисенче чăваш писателěсемпе композиторěсен тата ытти халăхěн классикăллă произведенийěсене параççě. Çамрăксем валли паракан передачěсем çамрăк ăрăва коммунистла воспитани пама пулăшаççě.

Партипе правительство вырăнти радиовещани ěçне сарасси çине тимлěн çавăрăнса пăхаççě. Мěншěн тесен вырăнти вещани вăл халăхшăн чи çывăх вещани пулса тăрать. Пирěн республикăра вăрçăччен 11 районра вырăнти вещани ěçне организациленě пулнă. Хальхи вăхăтра вырăнти вещанисем 23 районра ěçлеççě. Уйрăмăнах Çěрпÿ районěнчи (уполномоченнăйě Павлов юлташ), Канаш районěнчи (уполномоченнăйě Пермяков юлташ), Çěмěрле районěнчи (уполномоченнăйě Торганов юлташ), Улатăр районěнчи (уполномоченнăйě Садовникова юлташ) вырăнти вещанисем лайăх ěçлеççě.

Çавăнпа пěрлех çакна палăртас пулать: пирěн республикăри 6 районра вырăнти вещанисене ку таранччен те организацилемен-ха. Пирěн çывăх вăхăтрах пур районсенче те вырăнти вещанисене йěркелемелле тăвас пулать.

Чăвашрадиокомитечěн ěçěнче те чылай çитменлěхсем палăраççě. Лекцисемпе каласусен пахалăхě çителěксěр, юлашки хыпарсем пур чухне тенě пекех пěр тěрлě пулаççě. Радиокомитет ансамблěн программи те шěвěрех темелле. Юлашки вăхăтра хулари вещанин редакцийě ěçлеймерě. Çак çитменлěхсене пирěн çывăх вăхăтрах пěтермелле. Радио работникěсен хисеплě задачи—передачăсен пахалăхне лайăхлатасси, вěсене шухăш енчен те, форми енчен те лайăх йěркелесси пулать.

Пирěн республикăра нумай пин çынсем радио итлеççě. Çав вăхăтрах чылай ялсенче радио çук-ха. Çавăнпа та ялсене радио кěртес ěçе тимлěн сарса пымалла. Ку ěçе, паллах, радиопа çыхăну работникěсен вăйěпе кăна пурнăçа кěртме йывăр пулать, партипе совет тата комсомол организацийěсем енчен те тимлěн пулăшни кирлě.

Радио халăхăн кулленхи йăлине кěчě. Çавăнпа та радио ěçне кулленех вăйлатса, лайăхлатса пымалла.

С. ШУМКОВ (ШАВЛЫ),
Чăваш АССР Совнаркомě çумěнчи Радиокомитетăн председателě.

Укерчěк çинче: Шупашкар районěнчи «Правда» колхозра вăкăрсене кÿлме вěрентнě.

КОСТЫЛЕВ фотоÿкерчěкě.

Вăкăрсене кÿлсе çÿреме вěрентеççě

Куславкка районěнчи «Динамо» колхозра кăçалхи ялхуçалăх çулěнче кÿлме вěрентнě 4 вăкăрпа татти-сыпписěр ěçлерěç. Çураки тěлне туртăм вăйě çителěклě хатěрлес шутпа, колхозра халě татах 12 вăкăра ěçе вěрентме тытăннă.

Майракаллă шултăра выльăхсемпе «Красная Чувашия» колхозра та лайăх ěçлеççě. Çак колхоз пысăках мар. Халиччен унта икě вăкăрпа ěçленě. Çураки тěлне тата 4 вăкăра кÿлсе çÿреме вěрентеççě.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Колхоз лашине упрамалла

КУКЕÇ. Вăрçă вăхăтěнче туртăм вăйě ялхуçалăхěнче те, вăрçă хирěнче те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та лашасене йěркеллě пăхмалла, лашасен йышне çултан çулах ÿстерсе пырассишěн тăрăшса ěçлемелле.

Районри малта пыракан колхозсенче лашасене йěркеллě пăхаççě. Крупская, Чкалов, Карл Маркс, Водопьянов ячěсемпе тăракан тата ытти колхозсенче те лашасем мăнтăр та вăйлă. Лашасене яланах тасатаççě, чěрнисене тикěслесех тăраççě. Çав колхозсенче кÿлмелли хатěрсем те çителěклě, юсавлă. Кашни лашана хăйěн хатěрěпе кÿлеççě.

Анчах та лашасем çине чунсăррăн пăхакансем те районра сахал мар. Çавна пула ěнтě «Серп и молот», «1-ое Мая», «Заря», «Красная звезда», «Рунга», «Трудовик» тата ытти колхозсенче лашасем ырхан, вăйсăр тата таса мар. Кÿлмелли хатěрсем юсавсăр. Кочаково, Соляново, Абаш ялсовечěсенчи колхозсенче чирлě лашасем те пур.

Лашасене чиртен сыватасси çинчен районра чылайранпа калаçаççě. Анчах та зоотехникăпа ветеринари работникěсем колхозсене кирлě пек пулăшмаççě, колхоз председателěсемпе аслă конюхсем лашасен чир-чěрне хирěç тивěçлипе кěрешмеççě.

Лашасене йěркеллě пăхманнине тата кÿлсе çÿремелли хатěрсем начаррине пула хăшпěр колхозсенче кěсресем хăм пăрахнă тěслěхсем, суранланнисем тата вилнисем те пур. Куснарти «Кормилец» колхозра кăна 7 кěсре, Юраковăри «Тузи» колхозра 5 кěсре хăм пăрахнă.

Районри колхозсенче туртăм вăйě çителěксěр. Апла пулсан та, вăкăрсене кÿлме вěрентес ěç ытла та çителěксěр пырать. Паянхи куна 250 вăкăртан 60 вăкăра кăна кÿлме вěрентнě.

Г. ПЕТРОВ.

Ăшă та çутă витесенче

ШАХАСАН. «Новый путь» колхозри выльăх-чěрлěх фермисенче ěçлекен работниксем, республикăра пулса иртнě канашлăвăн материалěсене сÿтсе-явса, хăйсен ěçěсене тěрěслесе тухрěç. Кăçал фермăра ěçлекен колхозниксем чылай ěçсем тунă. Чăхсем валли çěнě вите лартнă. Ытти выльăхсем валли витесене тěпренех юсанă. Пур выльăхсем те халь ăшă та çутă витесенче пурăнаççě. Тěрлě йышши апатсем çителěклě. Çамрăк выльăхсем валли ăшă витесем хатěрленě.

Фермăра ěçлекен Петрова, Максимова, Васильев юлташсем тăрăшса ěçленипе, выльăх-чěрлěхсене ěрчетмелли плана ытлашшипех тултарнă. Аванс шучěпе 1945 çулшăн государствăна 60 пăт аш-какай панă.

Çамрăк выльăхсене тěрěс хěл касарас тата выльăх апачěсемпе перекетлěн усă курас енěпе ферма работникěсем конкретлă обязательствăсем илчěç. Çак кунсенче çамрăк выльăхсем валли кормушкăсем, шăвармалли хатěрсем туса пěтереççě.

А. АНТОНОВ.

ПОДСОБНĂЙ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ СЫСНА ĚРЧЕТЕССИ

СССР Халăх Комиссарěсен Совечě подсобнăй хуçалăхсенче сысна ěрчетесси çинчен постановлени йышăннă. Промышленность предприятийěсенчи рабочисемпе служащисене апатлантарассине лайăхлатма наркоматсем умне аш-какай ытларах хатěрлес задача лартнă. Подсобнăй хуçалăхсенче, овощехранилищěсенче тата столовăйсемпе ытти апат-çимěç предприятийěсенче хăйсен апачěпе тăрантарса сысна ěрчетмелли плана çирěплетнě.

1945 çулта подсобнăй хуçалăхсенче хăйсен сыснисене тăрантма çителěклě таран тымар-çимěç акса илме хушнă.

Постановленире çавăн пекех хуласемпе рабочи поселоксенче столовăйсемпе уйрăм çемьесенче юлакан апат юлашкийěсене пухассине организацилеме хушнă.

Сысна ěрчетмелли плана кварталтан квартала тултарса пыракан наркоматсене СССР Совнаркомě сысна çурисене тăрантарса ÿстермешкěн рабочисемпе служащисене сутма ирěк панă. (ТАСС).

КАМЧАТКĂРИ ÇĚНĚ ВУЛКАН

Камчаткăра Ключевски сопка хыççăн унтан 80 километр çурçěртерехре ларакан тепěр вулкан—Шивелуч чěрěлсе кайнă. Шивелуч сăрчěн айкисенче кěл капланса выртать. Çěрле вулкан патěнче пěлěт хěпхěрлě курăнать. (ТАСС).

Йывăр профессине алла илнě хěрарăмсем

Отечественнăй вăрçă çулěсенче, вăйпитти арçынсем тăшмана хирěç çапăçма фронта кайнă пирки, арçынсем ěçлекен вырăнсене хěрарăмсем тăчěç. Вěсем, тылра вăйсене шеллемесěр ěçлесе, фронта пулăшаççě, тăшмана çапса аркатас сехете çывхартассишěн кěрешеççě.

Вăрман ěçě йывăр ěçсенчен пěри шутланать. Вăрçăччен вăрманта пуринчен ытла арçынсем ěçленě. Халě вăрманта ěçлекенсенчен ытларахăшě хěрарăмсем. Арçын профессине алла илнě хěрарăмсем паянхи куна Вăрнар вăрманпромхозěнче те вуншарăн шутланаççě.

Е. Ивановăпа Малова юлташсем вăрман хатěрленě çěрте мастерсем, Н. Кольцовăпа Миговарова юлташсем мастер помощникěсем тата Емельянова, Н. Султанова, Осипова, А. Петрова, Е. Яргеева юлташсем пăчкă хăйракансем пулса ěçлеççě. Асăннă юлташсем нумаях пулмасть йывăç касна е техничкăсем пулнă. Халě вěсем хăйсен ěçне лайăх туса пыраççě, ěçре пахатěслěхсем кăтартаççě.

Вăрманпромхозра вутă хатěрленě çěрте хěрарăмсенчен организациленě вуншар бригадăсем ěçлеççě. Вěсенчен уйрăмăнах Анна Ильдуганова юлташ бригади палăрса тăрать. Хăйěн бригадипе пěрле вăрман ěççинче пысăк çитěнÿсем тунăшăн Ильдугановăна ЧАССР Верховный Совет Президиумěн Хисеплě грамотине парса наградăланă.

Е. ВОЛКОВ.

Хěвеланăç Европăри вăрçă ěçěсем

ЛОНДОН, январěн 5-мěшě. (ТАСС). Союзниксен экспедициллě вăйěсен верховнăй командованийěн штабě пичетлесе кăларнă пěлтерÿре çапла каланă:

Арден районěнче союзниксен çарěсем Гранменильтен кăнтăр-хěвелтухăçнерехре наступлени туса пынă. Çанталăк япăх пулин те, юр çуни тата çÿреме йывăр пулни союзниксем малалла куçассине чăрмантарнă. Буа-де-Тав тата Арбрфонтэн районěнчě тăшман контратакисене сире-сире пăрахнă.

Бастонь таврашěнче çапăçусем пыраççě. Тăшман кунта темиçе хут та контратакăсем туса пăхнă. Çак районтан хěвелтухăçнерехре тăшманăн пысăк мар подразделенийě Бурсирен Бастонь еннелле куçнă, анчах та часах каялла чакнă. Бастоньрен кăнтăртарахра союзниксен çарěсем Лютрбуа хулин çурçěр-хěвелтухăç хěррине тасатаççě, Арланжран хěвелтухăçнелле малалла куçса пыраççě.

Блисбрюккенран кăнтăртарахра тăшман чаçěсене, Грос Редершингенпа Аазхена çитнěскерсене, каялла хăваласа янă.

Антри Вогез районěнче, Битшран кăнтăр-хěвелтухăçнерехре, тăшман, пысăк мар атакăсем туса, союзниксен çарěсен хушшине хěсěнсе кěме хăтланнă. Филиппсбур таврашěнче çапăçусем пыраççě. Кольмар районěнче союзниксен разведка тăвакан отрячěсем çапăçнă. Рейн шывěн тури пайěнче тăшман Кемоса атакăланă, анчах та унăн атакине сирсе пăрахнă.

Çанталăк япăх пулни союзниксен авиацине кěрешме кансěрленě.

ЛОНДОН, январěн 5-мěшě, (ТАСС). Союзниксен Вăтаçěр тинěс таврашěнчи хěçпăшаллă вăйěсен штабě çапла пěлтерне: Италире, Равеннăран çурçěр-хěвеланăçнерехре. Канадăн малта пыракан танковăй тата пехота чаçěсем Рена шывěнчен пěр миля кăнтăртарахри канал патне çитнě. Тăшманăн темиçе вăйлă контратакине сирсе янă, тăшмана пысăк çухату кÿнě. Фаэнцăран çурçěртерехре союзниксем чылай малалла кайнă. 5-мěш армин участокěнче патрульсем çапăçнă.

Союзниксен Вăтаçěр тинěс таврашěнчи авиацийě 2.400 вěçев ытла тунă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĚ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, январěн 5-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пěлтерет: американецсен «Вěçекен крепость» йышши 1.000 бомбардировщикě, 500 истребитель хÿтěлесе пынипе, Хěвеланăç Германири çулсене тата чугун çул деповěсене тапăнни çинчен официальнăй йěркепе пичетлесе кăларнă. Кельн-Карлсруэ тата Франкфрут районěнче тăшманăн 20 объектне ытла тапăннă.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКЕСЕМ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, январěн 5-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви пěлтерне тăрăх, январěн 5-мěшě ыран тенě чух çěрле Англин «Москито» йышши самолечěсен икě соединенийě Берлина тапăннă. Пěр соединенийě Берлина каçхине 8 сехетре вěçсе çитнě, иккěмěшě— виçě сехет çурă каярах.

Черчилль Францие кайса килнě

ЛОНДОН, январěн 5-мěшě. (ТАСС) Рейтер агентстви пěлтерне тăрăх, паян каçхине Англи премьер-министрěн резиденцийě çакăн пек пěлтерÿ пичетлесе кăларнă:

«Паян кăнтăрла иртсен премьер-министр империн генеральнăй штабěн начальникěпе пěрле Францирен таврăнчě. Кěске вăхăтлăха Францире пулса, вăл Эйзенхауэр генералпа тата Монтгомери фельдмаршалпа тěл пулса калаçнă. Çавăн пекех вăл де Голль генералпа тата Дафф Куперпа канашланă.

ИТАЛИ ПАТРИОЧĚСЕН ĚÇĚСЕМ

РИМ, январěн 5-мěшě. (ТАСС). Римри радио пěлтерне тăрăх, 1944 çулта Итали партизанěсем 10.000 фашиста яхăн вěлернě, вěсенчен нумайěшě нимěçсем. Кунсăр пуçне, тăшманăн 2.000 салтакне тыткăна илнě. Пьемонтри партизансем тăшман валли ěçлекен чылай заводсене аркатса тăкнă. Кардона Валь Тромпиа хушшинче салтаксемпе хěçпăшал турттарса пыракан тăшман поезчěсене ÿпěнтере-ÿпěнтере янă, хěçпăшалпа боеприпассен нумай склачěсене аркатса тăкнă, нумай суднăсене сиен кÿнě. Патриотсем диверсиллě ěçсем те нумай тунă. Сăмахран, вěсем гитлерла оккупантсем усă куракан 16 чугун çул çинче поездсем çÿрессине нумайлăха чарса лартнă.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ БЕЛЬГИРЕ ТУНĂ ТИСКЕР ĚÇСЕМ

ЛОНДОН, январěн 5-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентстви акăлчансен çар влаçěсем Брендонка лагерěнче гитлеровецсем тунă тискер ěçсем çинчен каласа панине пěлтерет. Çав лагерьте усракан çынсене тискеррěн асаплантарнă. Вěсене тимěр тăлăпа тăлланă, чукмарсемпе, пушăсемпе хěненě, маччаран çака-çака янă, çынсене сигарсемпе пěçертнě, ÿчěсене пысăк напряжениллě электричество токěпе асаплантарнă, ал сыпписене хěскěчсемпе хěстерсе ватнă. Свидетельсенчен пěри каланă тăрăх, лагерьте сахалтан та 350 çынна асаплантарса вěлернě. 500 çынна яхăн выçăпа е асаплантарнине тÿсеймесěр вилнě.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, январěн 5-мěшě. (ТАСС). Рейтер агентствин Афины хулинчи корреспонденчě çапла пěлтерет: январěн 5-мěшěнче Англи çарěсем, танксемпе самолетсем пулăшнипе, Афины хулин хěвеланăç тата çурçěр хěррисенче чылай пысăк вырăн йышăннă. Январěн 4-мěшěнче Англи çарěсем хулари чи паха тăватă çула тытнă та апат-çимěçпе боеприпассен нумай склачěсене тытса илнě. Пěр площадь çывăхěнче хаяр çапăçусем пулса иртеççě. Англи çарěсем унта, кашни кварталшăн çапăçса, 6 урам туртса илнě. ЭЛАС чаçěсенче 151 çын вилнě, 72 аманнă тата 521 çын тыткăна лекнě.

РОМЕН РОЛЛАНА ПЫТАРНИ

ПАРИЖ, январěн 4-мěшě. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пěлтерне тăрăх, ěнер Кламсире Ромен Роллана пытарнă. Ăна пытарма питě нумай халăх пуханнă. Франции хěçпăшаллă шалти вăйěсем хисеплě караулта тăнă. Вилес умěн Ромен Роллан хăй калаçа хăварнă тăрăх, унăн тупăкě умěнче пěр çын кăна—Кламсири наука обществин председателě Милландр кăна сăмах каланă. Вăл хăйěн сăмахěнче Ромен Ролланăн Кламсире иртнě ачалăхě çинчен, Франци çěрěн çав кěтесне аслă писатель çав тери юратни çинчен, вăл вырăн ăна чи лайăх произведенисем çырма хавхалантарни çинчен каласа панă.

Писательсен Парижри комитечě (унта Дюамель, Морнак, Валери, Доржелес тата Арагон кěреççě) тата интеллигенцин ытти нумай представителěсем Ромен Роллан виллине Пантиона куçарма сěннě.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĚСЕМ ЯПОНИЕ ТАПАННИ

ВАШИНГТОН, январěн 3-мěшě. (ТАСС). США çар министерстви пěлтерне тăрăх, Америкăн «Вěçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă бомбардировщикěсем, Сайпан утравě çинчен вěçсе кайса, Хонсю (Япони) утравě çинчи промышленность объекчěсене тапăннă.

ТОКИО, январěн 3-мěшě. (ТАСС). Японин императорă-ставки çапла пěлтерне: паян американецсен «Б-29» йышши 90 бомбардировщикě, Марнан утравěсем çинчен вěçсе хăпарса, Нагоси Осака тата Хамамацу таврашне çитнě. Осакăпа Хамамацура пăрахнă бомбăсем пăртак сиен кÿнě.

—⊙—

ВĂТАМ АЗИРЕ ГАЗОПРОВОДА ТĂВАÇÇĚ

Андижанри газопровода тăвас тěлěшпе тěп ěçсене вěçлесе çитерне. Вăл Вăтам Азири пěррремěш газопровод пулать. Хулари главнăй коллектора хывса çитернě. «Андижан» нефть промыслинче проводăн юлашки çур километрне хывса çитереççě.

Газопроводăн пěррремěш черетне январь уйăхěнче хута яраççě. (ТАСС).

ЛАТВИРЕ ГОСУДАРСТВО УНИВЕРСИТЕЧĚ ĚÇЛЕМЕ ПУÇЛАНĂ

Рига хулинче Латвири государство университечěн пур факультечěсенче те занятисем пуçланнă. Çак ěçе халăх наци культурин пысăк çитěнěвě тесе палăртать. Университет — СССР-ти чи ватă учебнăй заведенисенчен пěри. Вăл Российăри 1862 çулта уçнă политехника институчěн никěсě çинче ÿссе ларнă.

Латви университечěн пур факультечěсенче те 103 кафедра шутланать. 36 кафедрăра аспирантура пулмалла. (ТАСС).

КĚСКЕН

▲ Швейцарири «Санкт-Галлер Тагблад» хаçат пěлтерне тăрăх, çак кунсенче икě нимěç хăйсен çемьисемпе пěрле Германипе Швейцари чикки урлă вăрттăн каçнă пулнă. Вěсем Швейцари влаçěсенчен хăйсене йышăнма ыйтнă. Вăл çынсем Аугмбургри «Мессершмитт» ятлă авиаци завочěсен директорěсем пулнă. Германире гитлерла режим ишěлсе анассине курса, вěсем ют çěршыва тарма шутланă.

Швейцари влаçěсем çав нимěçсене йышăнман, вěсене каялла чикě патне илсе пынă та гестапо аллине панă.

▲ Англипе Франци килěшÿ тунă. Çак килěшÿ тăрăх, икě çěршыв хушшинче тăтăшах карапсем çÿреме пуçламалла. Пирвайхи карапсем январь уйăхěн варринче çÿреме пуçлаççě.

▲ Январěн 3-мěшěнче Индин 15-мěш корпусěн чаçěсем Бирман хěвеланăç хěрри çывăхěнчи Акьяб утравě çине аннă.

▲ Январěн 5-мěшě ыран тенě чух çěрле Германи авиацийě Кăнтăр Англие тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула, çынсем вилленě.

▲ Францире Марсельре 6 банкăн директорěсемпе управляющийěсене суд умне тăратаççě. Вěсене тăшманпа çыхăнса тăнăшăн айăплаççě. Çак çынсем иртнě çулхи август уйăхěнче нимěçсене Франци ылттăнне тата ют çěршывсен валютине панă.

▲ Пěрлешÿллě Штатсем Эквадор çěрě çинче тунă базăсене вăрçă хыççăн та хăйсен аллинчех хăварма ыйтнă. Эквадорăн Консультаци ассамблейи США ыйтнипе килěшмен.

▲ Югослави халăхěн ирěклěх çарě Загреб хули патне çывхарнă пирки нимěçсем хулана ишěлтерме хатěрленеççě. Шанчăклă пěлтерÿсем тăрăх, чи паха заводсене, учрежденисене тата Хорвати столицин казармисене минăсем лартса сирпěтсе яма хатěрленеççě.

▲ Çурçěр Италире. Германие ěçлеме ирěксěрлесе яма е Муссолинин «çарне» мобилизацилеме тăрăшса, итальянецсем хыççăн хăвалаççě. Калана вăхăтра вербовка бюровне пыман çынсене тытсан çав вырăнтах персе пăрахаççě.

▲ Халě паллă пулнă тăрăх, Германин фон Клюге фельдмаршалě Нормандире нимěçсем поражени тÿснě хыççăн хăйне хăй вěлернě. Германи командованийěн союзниксен аллине лекнě приказěнче каланă тăрăх, Клюге вăл хăйне Германи çарěсен командующийě вырăнěнчен кăларнă хыççăн вěлернě.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти электромеханически техникума техникум курсěшěн экстернат йěркипе экзамен пама ыйтса çырнă заявленисене йышăнаççě.

Заявленисене вăтам шкулта çичě çултан кая мар вěреннě тата производствăра икě çултан кая мар ěçленě çынсенчен пуринчен те йышăнаççě. Заявленисене çулталăк тăршшěпех йышăнаççě.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

5—2.

Чăваш АССР Совнаркомě çумěнчи Кинофикаци управленине çакăн пек работниксем васкавлăн кирлě: главнăй бухгалтер, главнăй бухгалтер заместителě, старши диспетчер, машинистка, шофер тата киноаппаратурăна юсакан мастерсем. Главнăй бухгалтера апат-çимěç литер йěркипе параççě. Çак адреспа ыйтса пěлмелле: гор. Чебоксары. Кинотеатр, отдел кадров Управления кинофикации.

Тěнчери лару-тăру

1945 çула гитлерла Германи пěр пěччен тăрса юлса кěчě. Совет çарěсем Будапештшăн çапăçни нимěçсем Венгрин пысăкрах пайне тата хăйсен юлашки союзникне çухатнине пěлтерет. Венгрин Хěрлě Çар ирěке кăларнă çěрě çинче туса хунă Халăх Правительстви Германие хирěç вăрçăпа тухасси çинчен пěлтерчě тата перемири çинчен калаçма Мускава хăйěн делегацине ячě.

Будапешт патěнче хупăрласа илнě фашистла çарсем халě хирěç тăрса вăйлăн çапăçаççě-ха. Будапештри гитлеровецсем совет командованийě кăларса тăратнă ультиматума йышăнмарěç, парăнма килěшмерěç. Ку çеç те мар, вěсем, нумай ěмěрсем хушши пыракан вăрçă йăлине пăрахăçа кăларса, совет офицерěсене парламентерсене вěлерчěç. Çапла тунăшăн вěсене малта пыракан пěтěм этемлěх кураймасть.

Дунай таврашěнче хăрушă йывăрлăха кěрсе ÿкнине хăйěн халăхěнчен пытарса, нимěç командованийě хěвеланăçěнче контрнаступлени пуçласа ячě. Геббельс пичечě ун пирки савăнса нумай çухăрашрě. Анчах пирěншěн çакă паллă: фронтăн ансăр участокěнче çителěксěр вăйпа тата çителěксěр резервсемпе пуçланă çав наступлени кирлě пек аталанма пултараймарě, тěрěссипе каласан, вăл пăчланса ларчě те ěнтě.

Хěвеланăçěнче наступлени туса пынă вăхăтрах гитлерла командовани хěвелтухăçнелле çавăрăна-çавăрăна пăхать. Америкăри «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйěн редакцийě çырнă статьяра çакна палăртса парать: «Нимěçсем хěвеланăçěнче пуçласа янă контрнаступлени вырăс çарěсем Будапешт еннелле вăйлăн куçса пынине пула çеç пăчланса ларма пултарчě», тет.

Союзниксен çарěсен фронтěнче шăтарса кěнине нимěçсем аслăлатма пултараймарěç. Паттон генерал ертсе пыракан американецсен виççěмěш армийě хастарлăн кěрешнипе нимěç группировкин сулахай флангěшěн хăрушлăх сиксе тухрě. Çавна пула ěнтě Батонь хули патěнче нимěçсем хупăрласа илнě Америка çарěсем татса тухма пултарчěç. Çавăн пекех союзниксем Рошфор хулине те ирěке кăларчěç. Вăл хула союзниксен çарěсем хушшине нимěçсем шăтарса кěнě савăлăн вěçěнче ларать.

Хěвеланăçěнчи çапăçусен малашнехи пуласлăхě çинчен Америкăри радио çапла калать: «Нумай уйăхсем хушши çирěплетнě оборонăн лайăх позицийěсене нимěçсем пăрахрěç те пуçсăрланса наступлени пуçласа ячěç. Вăл наступлени мěнпе вěçленесси питех те паллă мар».

Хěвеланăç фронтěнчи пěр-пěр участокра Германи çарěсем шăтарса кěме хăтланни халě ěнтě нимěçсене усă пама пултараймасть, мěншěн тесен вěсем халь «ансăрран тапăнма» пултараймаççě ěнтě тата вěсен пысăк наступлени тума вăй çителěклě мар. Çапла вара, контрнаступлени пуçласа янă хыççăн малтанхи вăхăтра тунă тактикăллă çитěнÿсене нимěçсем стратегиллě çитěнÿ туса яма пултараймарěç.

* * *

Çěнě çулта тěнчери пичет фронтсенчи ěçсене пăхса тухнă. Çав итогсемпе паллашсан, гитлерла Германие аркатса тăкасси такамшăн та паллă пулса тăрать. Сталинградпа Будапешт хушшинче мěнле кампани, мěнле хаяр çапăçусем пулса иртрěç!—тесе çырать Америка обозревателě Поль Шуберт.—Ростов тата Севастополь, Одесса тата Плоешти, Бухарест тата Белград—çаксем вěсем çул çинчи маяксем... Германипе унăн союзникěсен çарěсем совет çарěсене чарса тăма хăтланчěç. Кун çинче Хěрлě Çар Будапешта хупăрласа илнипе ответлерě, Будапешт вăл Берлина илсе кěрекен аслă çулăн пěр пайě пулса тăрать».

Темěн тěрлě тăрăшсан та гитлеровецсем халь гитлерла Германи мěн тери пысăк йывăрлăха кěрсе ÿкнине пытарма пултараймаççě. «Фелькишер беобахтер» хаçат хуйхăрса çапла çырать: «Сталинград патěнче совет çарěсем Германи савăлне çěмěрсе кěме пуçланăран вара икě çул иртрě... Сталинградран, вара,—тет хаçат — йывăр тата хăрушă поражениcем пуçланчěç. Пирěн нумай территорисене каялла памалла пулчě, эпир нумай материалсем çухатрăмăр, пирěн çынсем нумай вилчěç. Сталинграда тытса илнипе пěрлех пирěн пуçарулăха та туртса илчěç». Çапла каласа, статья авторě нимěçсем хěвеланăçěнче тунă наступлени малтан тÿснě поражениcене хупласа хума пултарě тесе шутланă пулмалла. Вăл ěнтě нимěç командованийě çěкленě «çиçекен хěç» çинчен те каласма пуçтарăнчě. Ун шучěпе, нимěçсем каллех пуçарăва хăйсен аллине илеççě мěн.

Анчах та ěç пěтěмпех урăхла пулса тухрě. Кирек епле пулсан та, Гитлер хăйěн çěнě çул ячěпе каланă сăмахěнче хěвеланăç фронтěнчи ěçсем çинчен çăвар та уçмарě. Ун вырăнне вăл «нимěçсем тÿснě хăрушă поражениcем» çинчен каларě. Чăнахах та ěнтě, çакăншăн вăл айăпне хăйěн союзникěсем çине тата сутăнчăк генералсем çине хурасшăн пулнă. Анчах çапла каланипе фашистсен япăх ěçě лайăхланас çук. Акă мěншěн ěнтě Гитлер нимěçсене «ним шутламасăр вěçне çитиччех çапăçма» чěнет. «Çапăçуран пăрăнса юлма хăтланакан çынна кашнинех пěтерсе хурассипе» хăратать.

«Иртнě çулта, — пăшăрханса çырать «Фелькишер беобахтер» ятлă гитлерла хаçат 1944 çулăн итогěсем çинчен.«Германи хулисене аркатса тăкрěç, çěршыв варринче ларакан ялсене те вилěм пырса тиврě».

Мěн каласси, ку ěнтě тăшман çăварěнчен тухнă чăн сăмах!

* * *

1944 çул пěтсе 1945 çул пуçланнă вăхăтра Польшăра пысăк ěç пулса иртрě. Польша Халăх Совечěн Люблинра пулса иртнě сессийě, халăхсен анлă массисем ыйтнă тăрăх, Польша Халăхěн Ирěклěх Комитетěнчен Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине тума йышăнчě. Польша республикин 1921 çулхи конституцийě тăрăх, Польша Халăх Совечěн президенчě Берут хушнипе, январěн 1-мěшěнче Осубка-Моравский премьер-министр, Польшăри демократиллě партисен пур представителěсене те кěртсе, çěнě правительство туса хучě. Польша халăхě хăйěн çěнě правительствине савăнса хапăл тăвать. Çакна тěрлě пухусемпе митингсенче йышăннă нумай резолюцисем лайăх кăтартса параççě.

Парижри радион политика обозревателě Польшăра Вăхăтлăх Правительство туса хуни çинчен çапла каланă: «Пěлекен çынсем шутланă тăрăх, Люблинри комитета Польша халăхě шанса тăрать. Польшăра пулса иртнě реформăсем, пуринчен ытла çěр касса пани, Польша халăхěн кăмăлне каякан ěçсем пулса тăраççě», тет. Çакăн пирки ют çěршыв хаçачěсем чылайěшě Польшăн эмиграцири «правительствин» кунçулě шанчăксăрри çинчен çыраççě. Çав «правительство» Польшăра пулса иртекен ěçсене пула аптăраса ÿкнě. «Дейли геральд» хаçатăн обозревателě Юэр, сăмахран, Арцышевский «кабинечě çÿç пěрчи çинче çакăнса тăрать», тет.

Кунта пулнă хăнасем,—тесе пěлтерет Люблинран Америкăри Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчě. — çěнě правительство çирěп правительство пулать, тесе шутлаççě. Халăхăн пысăкрах пайě Вăхăтлăх Правительствăна шанса тăрать çеç мар, çěнě политика тěлěшпе ěнлануллă çар туса хунипе, правительство халăхě хушшинчи çав шанчăка çирěплетсе пырать».

Польша республикин Вăхăтлăх Правительстви январěн 4-мěшěнче Совет Правительствинчен пěр-пěрине дипломатиллě çыхăнусем тытма пуçласа пěр-пěрин патне посолсем яма ыйтнă. Демократиллě Польшăпа туслă пурăнса çав çыхăнăва çирěплетсе пырас политикине пурнăça кěртес шутпа СССР Верховный Совет Президиумě Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине йышăнма тата пěр-пěрин патне посолсем яма килěшнě.

В. ГРИШАНИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0—67, заместителěн секретарен — 4—26, парти пурнăç пайěн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайěсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00503. Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № ф. б. 59×4 и. л. Тираж 16.000 экз.